

сайт:
putpobedy.ru

# ШКУЛ САССИ

Проект авторĕ – Светлана Чикмякова.



**Сăмах – Мăн Явăшри вăтам шкул ачисене**

## Космоса тĕпчес килет



Каçхи тӳпе. Тĕнче уçлăхĕ. Çăлтăрсем. Мана çав тери кăсăклантараççĕ вĕсем. Çавăнпа эпĕ шкулти «Çамрăк космонавт» кружока çӳретĕп. Ăна А.В.Павлова ертсе пырать. Вăл питĕ кăмăллă, пирĕнпе ялан сăпайлă калаçать. Кружокра интереслĕ. Кашни занятинче тенĕ пекех пĕчĕк сăнавсем, тĕпчевсем ирттеретпĕр. Планетăсен, çăлтăрсен макечĕсене те хамăр алăпа хатĕрлетпĕр, сывлăшра вĕçекен çĕленсене те ăсталатпăр. Каярахпа хамăрăн ĕçсемпе районти, республикăри, Раççей шайĕнчи конкурссене хутшăнса çĕнтеретпĕр. А.Николаев, Ю.Гагарин, В.Терешкова пултарулăхĕсене тĕпчетпĕр, наукăпа практика конференцийĕсене, вулавсене хутшăнатпăр. Ăçта анчах пулса курман-ши эпир: Шуршăлта, Çĕрпӳре, Самарăра тата ытти çĕрте. Конкурссенчен нихăçан та пуш алăпа таврăнман, яланах темиçешер грамота-диплом илсе килнĕ.

Çак кружокра сăвă çырас ăсталăха та туптатпăр.

**Никита ПЕТРОВ, 9-мĕш класс.**



## Патриотсем пулма тăрăшатпăр

Маншăн шкул вăл – хăйне майлă пысăк тĕнче. Кунта çырма-вулама вĕренетпĕр, тус-юлташ тупатпăр, савăнатпăр, хурланатпăр.

Эпир – 7-мĕш класра вĕренекенсем – кадетсем. Пирĕн класс питĕ туслă, пултаруллă. Район, республика шайĕнче иртекен конкурссене, ăмăртусене час-часах хутшăнатпăр. Хавхалантарса пыракансем – атте-анне тата класс ертӳçи Т.В.Иванова. Вĕсем тăрăшнипех пире валли чаплă кадет костюмĕсем çĕлерĕç.

Мăн Явăш кадечĕсен çывăх тусĕ те пур – Эрик Васильевич Васильев. Вăл кадетсен çул-йĕрне уçса пырать, яланах сĕнӳ-канаш парать. Çавăн пекех вăл тăрăшнипе Мăн Явăш шкулĕнче Тăван çĕршыв хӳтĕлевçин уявне кашни çулах чаплăн уявлатпăр.

Кадет пулма, унăн тивĕçне çӳлте тытса пыма çăмăлах мар. Апла пулин те эпир нихăçан та пуçа усмастпăр. Уроксем хыççăн стройпа утас пултарулăха туптатпăр, командир хушăвĕсене итлесе тĕрĕс пурнăçлама вĕренетпĕр. Çав вăхăтрах автомата вăхăтпа сӳтсе пуçтарассине те алла илме тăрăшатпăр. Пĕрремĕш пулăшу парас хăнăхусене те çирĕп пĕлмелле кадетсен. Çĕршывăн чăн-чăн патриочĕсем пулма тăрăшатпăр.

**Таня РАКОВА, 7-мĕш класс.**

## Упрар тăван чĕлхемĕре!



*Тăван чĕлхем! Хаяр та çепĕç,*
*Аçа çапни те чĕв чĕкеç.*
*Санпа кăна çын шутлă эпĕ,*
*Телейлĕ эпĕ санпа çеç,* – шăрçаланă пирĕн ентеш-поэт А. Воробьев пĕр сăввинче. Çапла, кашни çыннăн Тăван çĕршывĕ, юратнă кĕтесĕ пур. Кашниех унта хăйĕн чĕлхипе калаçать. Манăн тăван чĕлхе – чăваш чĕлхи. Мĕн тери пуян та çепĕç вăл!

«Халăхăн ăс-тăнĕпе унăн пĕтĕм тĕнчекурăмне тăван чĕлхе чун парать. Унсăр чăн-чăн пĕлӳ çук», – тенĕ И.Я.Яковлев. Чăваш халăхĕ мĕн авалтан çамрăк ăрăва хăйĕн чĕлхине юратма, хисеплеме ахальтен вĕрентмен. Тăван чĕлхерен эпир мĕн пĕчĕкрен ăс-тăн илсе ӳсетпĕр.

Мăн Явăш шкулĕнче пире тăван чĕлхене хисеплеме вĕрентсе çитĕнтереççĕ. Уйрăмах ку енĕпе манăн юратнă учитель И.Н.Моисеева хастар ĕçлет. Эпĕ унăн урокĕсене чăтăмсăррăн кĕтетĕп. Мĕншĕн тесен тăван чĕлхене питĕ юрататăп. Ирина Николаевна пĕтĕм чун-чĕрипе ачасене тарăн пĕлӳ пама тăрăшать. Вăл хавхалантарнипе эпир тĕрлĕ акцисене, олимпиадăсене, викторинăсене хутшăнатпăр. Унăн урокĕсем те питĕ кăсăклă иртеççĕ. Эпĕ ăна ырă кăмăлĕшĕн, тăрăшулăхĕшĕн, вашаватлăхĕшĕн питĕ хисеплетĕп.

Хамăрăн тăван чĕлхене юратма, хисеплеме пĕлмелле. Чăваш чĕлхин вăйĕ кунран кунах ӳссе пытăр, аталантăр. Пирĕнте, çамрăксенче, унăн пуласлăхĕ. Упрар тăван чĕлхемĕре!

**Ангелина БЫКОВА, 7-мĕш класс.**

## Герой партти хушшине ларатпăр

**Эпир пĕртăван Викторийăпа Валерия Митрофановасем. Пирĕн шкул Федор Иванович Ашмаров ячĕпе хисепленсе тăрать. Вăл Совет Союзĕн Геройĕ, пирĕн ентеш.**



Федор Иванович Ашмарова сума суса кăçалхи нарăс уйăхĕнче ун ячĕпе шкулта Герой партти уçăлчĕ. Унта чи пĕрремĕш ларма эпир тивĕçрĕмĕр. Паллах, парта хушшине кĕрсе лариччен пур ача, хăнасем, вĕрентекенсем умĕнче тупа турăмăр. Шкулта лайăх вĕренме, ĕçре те, вăйăра та, спортра та маттур пулма сăмах патăмăр.

Герой партти тĕлĕнмелле илемлĕ. Вăл симĕс тĕслĕ. Ун çинче Ф.И.Ашмаровăн сăнӳкерчĕкĕ пур. QR-код тăрăх Геройăн тулли автобиографине пĕлме пултаратпăр, фронтри сăнӳкерчĕкĕсене пăхатпăр. Çакăн пек Герой партти Вăрнар районĕнче пĕрре çеç.

Эпир хамăр тивĕçе çирĕп тытса пыратпăр, тупа тунине манмастпăр, шкулта «пиллĕк» паллăпа çеç вĕренетпĕр. Çав вăхăтрах Герой парттине те тирпейлĕ тытатпăр, ăна тасатсах тăратпăр. Герой партти хушшинче ларма тӳр килнĕшĕн эпир савăнатпăр.

**Виктория тата Валерия МИТРОФАНОВАСЕМ, 7-мĕш класс.**

## Манăн пĕчĕк тус



Эпĕ пĕчĕк чухнех, хам астăвасса, кушак çури çинчен ĕмĕтленеттĕм. Аттепе анне ăна киле илсе килме ирĕк памастчĕç.

Тинех чи çутă ĕмĕт тулчĕ, мана кукамай пĕчĕк, хитре кушак çури парнелерĕ. Вăл хĕрлĕрех сарă тĕслĕ. Кайри урисем унăн шурă, куçĕ симĕс. Кушак çури питĕ вăр-вар. Ăна мĕнле ят парасси çинчен нумайччен шухăшларăм. Шыраса тупрăм – Басик ят хутăм.

Басик – лара-тăра пĕлмен кушак çури. Стена тăрăх ним мар сике-сике выляма пултарать. Эпĕ шкула тухса кайсан тунсăхлать, таврăнасса чăтăмсăррăн кĕтет. Урок тума пуçласан кушак çури ман çине тимлĕн пăхса ларать, кансĕрлемест.

Мана чĕрчунсене юратма вĕрентнĕшĕн пĕрремĕш учителе, О.А.Иванова, тав тăватăп.

**Таня ТИМОФЕЕВА, 5-мĕш класс.**

## Ĕç çынна илем кӳрет



Эпĕ Мăн Явăш ялĕнчи питĕ туслă, тăрăшуллă çемьере пурăнатăп. Аттепе анне хĕвел тухиччченех вăранаççĕ те ĕçе пикенеççĕ. Пире те хăйсем пек пулма вĕрентеççĕ.

Эпир кил хуçалăхĕнче ĕне нумай усратпăр. Вĕсем пирĕн ултă пуç. Мĕнле-ха ялта атте-аннене пулăшмасăр? Эпĕ ĕнесене пăхма питĕ юрататăп, вĕсемпе хăш чух калаçатăп та. Мана вĕсем ăнланса итленĕ пекех туйăнать. Кашнин хăйĕн кăмăлĕ. Акă, Марта 3 çулта. Вăл хура тĕслĕ, кăмăллă ĕне. Вăрăм майракаллă пулсан та тĕкĕшмест. Красуля вара сĕтлĕ ĕне. Вăл хĕрлĕ тĕслĕ. Хăйне кӳрентерекенсене тĕкме юратать. Ĕнесем çеç мар, пăрушĕсем те кăмăла каяççĕ. Пĕчĕк чухне епле хитре-çке вĕсем! Çак чĕрчунсене юратнипех манăн пысăк ĕмĕт çуралчĕ. Ӳссе çитĕнсен атте-анне пекех ăста фермер пулас, майракаллă шултра вылăхсене ĕрчетес килет. Çавна май эпĕ шкулта та тăрăшса вĕренетĕп. Тавах аттепе аннене чĕрчунсене юратма вĕрентсе ӳстернĕшĕн.

**Егор ВАСИЛЬЕВ, 5-мĕш класс.**

## Пирĕн кукамай



Пирĕн кукамай, Светлана Владимировна Федорова, хăйĕн ĕмĕрне йăлтах шкулпа çыхăнтарнă теме пулать. Унăн ĕç стажĕ 30 çултан та иртет. Вăл Мăн Явăш шкулĕнче математика предметне вĕрентнипе пĕрлех директор çумĕн ĕçĕсене те пурнăçласа пынă. Мĕн чухлĕ ача-на ăс-тăн паман-ши вăл?

Кукамай питĕ кăмăллă çын. Мăнукĕсене яланах тараватх кĕтсе илет. Пире валли унăн кучченеç кашнинчех хатĕр, хăйĕн патне пырсан нихăçан та хăналамасăр кăларса ямасть. Хăш чух тата, математика енĕпе йывăрлăх сиксе тухсан та, часрах кукамай патне чупатпăр. Кунта та пулăшма хавас вăл пире. Эпир, мăнукĕсем, кукамая питĕ юрататпăр. Ăна савăнăç кӳме шкулта тăрăшса вĕренетпĕр.

**Каролина ШАРИКОВА, 5-мĕш класс.**
**Динара ФЕДОРОВА, 6-мĕш класс.**

## Роботсене юрататăп



Эпĕ пĕчĕк чухнех роботсемпе питĕ кăсăкланаттăм. Вĕсем çинчен мультфильмсем курма юрататтăм. Çавна пулах-и, тен, IT-Куб кружокне çӳреме кăмăл тупăнчĕ. Эпĕ иккĕмĕш çул ĕнтĕ кунта ăс пухатăп, ăсталăха туптатăп. Кружокра мана кăсăклантараканни питĕ нумай. 6-мĕш класра çеç вĕренетĕп пулин те пĕчĕккĕн роботсемпе ĕçлес технологие алла илсе пыратăп. Пултаруллă учительсем ертсе пынипе роботсене те хамăрах пуçтаратпăр, вĕсене хусканусем тума вĕрентетпĕр. Ку технологи çăмăлах мар. Апла пулин те мана ку ĕç кăмăла каять.

**Кирилл ТИМОФЕЕВ, 6-мĕш класс.**

3-мĕш стр.

## Сăмах – Вăрман Кипекри вăтам шкул ачисене




# Паттăр ентешпе мăнаçланса

**Кивçурт Енĕшре Совет Союзĕн Геройĕн Степан Илларионович Илларионовăн музей-çурчĕ вырнаçнă. Ăна ял халăхĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче тăшманпа хăюллăн кĕрешсе пуçне хунă мухтавлă ентешне сума суса уçнă.**

Степан Илларионов 1941 çулта хăй ирĕкĕпе фронта тухса кайнă. 1-мĕш Хĕвеланăç Белоруссi тата 1-мĕш Прибалтика фрончĕсенче нимĕç фашисчĕсемпе çапăçнă. Степан Илларионов 1944 çулта Белоруссi çĕрне ирĕке кăларассишĕн пынă хаяр çапăçура йывăр аманать, 18 нимĕç салтакне тĕп тăвать.

Пирĕн ентеше паттăрлăх кăтартнăшăн Совет Союзĕн Геройĕн ятне вилнĕ хыççăн параççĕ. Ялти скверта Герой ятне çырса гранитран Асăну чулĕ лартаççĕ.

Музейра вăрçă вăхăтĕнчи унпа çыхăннă тĕрлĕ документсемпе экспонатсене курма пулать. Краеведени уйрăмĕ вăл пурăннă чухне килте усă курнă ĕлĕкхи япаласемпе паллаштарать. Нумаях пулмасть эпир те Геройăн музей-çуртне çитсе куртăмăр. Унта Ленинграда хӳтĕлекенсене халалласа курав уçнă май, Калинин хулинчи 210-мĕш танк бригадинчен илсе килнĕ экспонатсемпе паллашрăмăр. Ачасен кунта ĕлĕкхи тата хальхи пурнăçа танлаштарма май пур.

**Николай АЛЕКСЕЕВ, 6-мĕш класс.**

# Хамăра тĕрĕс тытасчĕ

**Пирĕн класра «Терроризма хирĕç кĕрешесси – çивĕч ыйтусен шутĕнче» темăпа калаçу иртрĕ.**

Унта çак хăрушă пулăм мĕн патне илсе çитернине сӳтсе яврăмăр.

Паянхи кун шкулсенче тата хушма пĕлӳ паракан учрежденисенче кашни объект тавра карта тытса çавăрнă. Унсăр пуçне вĕсенче видеосăнав, хурал, кăнтăрла пропуск йĕркине çирĕплетнĕ.

Инкек куçа курăнса килменнине пурте лайăх пĕлетпĕр. Çавăнпа та хăрушă ларутăрура хамăра тĕрĕс тытма пĕлмелле.

**Марина ДАНИЛОВА, 2-мĕш класс.**

# Аслисене пулăшатăп

**Анне мана «эсĕ манăн пулăшаканăм» тесе чĕнет. Ку вăл ахальтен мар.**

Уроксем тунă хыççăн яланах ăна пулăшма тăрăшатăп. Атте Мускава ĕçлеме çӳрет. Çавăнпа килти ĕçсем ытларах аннен хулпуççийĕ çинче. Вăл хушнине эпĕ васкасах пурнăçлатăп. Çулла пахчари çумкурăка çумлатăп, утă пуçтаратăп, кил хушшинче чĕпсене пăхатăп. Хĕлле çил-тăмансем хыççăн юр тасататăп. Хамăн кулленхи ĕçсене манмастăп. Каçхи апат умĕн кашни кунах йăмăка уçăлма илсе тухатăп.

Асаннене те пулăшатăп. Шыв витрисене тултарса паратăп, чăхсене тырă сапса çитеретĕп. Асанне уншăн питĕ хĕпĕртет. Мана яланах пуçран шăлса тав тăвать.

**Егор ЕГОРОВ, 4-мĕш класс.**

# Каникул асрах

**Çуллахи каникул чи вăрăмми. Ун чухне çанталăкĕ те ăшă, таврара та илемлĕ.**

Пушă вăхăтра юлташсемпе чупса-выляса кантăм, велосипедпа нумай ярăнтăм. Унсăр пуçне аттепе аннене вăй çитнĕ таран пулăшас терĕм. Купăста, помидор шăварма пĕрле тухрăм. Çумкурăк çумлама пулăшрăм. Пиччепе, атте-аннепе кĕтӳ пăхма та çӳрерĕм.

Ешĕл курăка çулсан кĕрепле тытса аслисемпе пĕрле утă пуçтартăм. Аттепе аннене пулăшнăшăн эпĕ савăнатăп.

**Мария ДАНИЛОВА, 4-мĕш класс.**

# Кушак

Пирĕн килте икĕ кушак пур. Вĕсем Муркăпа Даша ятлă. Мурка хура-хăмăр тĕслĕ тата унăн мăйĕ патĕнче шурă. Даша сарăпа шурă тĕслĕ, куçĕсем – хăмăрпа симĕс. Вĕсем выляма юратаççĕ, урамра шăши тытаççĕ. Эпĕ хамăн кушаксене питĕ юрататăп.

**Татьяна ИВАНОВА, 4-мĕш класс.**

# Иккĕмĕш кил

Шкул – пирĕншĕн иккĕмĕш кил. Вăл пулмасан ачасем пĕлӳ илеймеççĕ. Шкула упрамалла, унта тирпейлĕ тата килти пек таса пулмалла. Эпир – 7-мĕш класра вĕренекенсем, Алина тата Снежана ятлă. Туслă пурăнатпăр. Пĕлтĕр эпир класра иккĕн кăна вĕреннĕ. Кăçал йыш хушăнчĕ: пĕр арçын ача вĕренме килчĕ. Малтанхи çул класс ертӳçи Мария Александровна пулнă. Вăл технологипе рисовани предмечĕсене вĕрентрĕ. Мария Александровна пирĕн пултарулăха аталантарма тăрăшрĕ. 6-мĕш класра тĕрлĕ конкурссене хастар хутшăнтăмăр. Кашнинчех палăрма, малти вырăнсене йышăнма пултартăмăр. Эпир тата çыхма, тĕрлеме, çĕлеме питĕ юрататпăр.

**Снежана ВАСИЛЬЕВА, Алина АФАНАСЬЕВА.**

# Персик

Манăн юратнă тус пур. Вăл Персик ятлă йытă. Хăй хăмăр тĕслĕскер, куçĕсем симĕс. Ăна кашни кун тĕрлĕ апат çитеретĕп. Каç пуличчен Персикпа урама уçăлма тухатăп. Вăл шанчăклă хӳтĕлевçĕ, пире вăрă-хурахран сыхлать.

**Вероника ИВАНОВА, 3-мĕш класс.**

# Шкул историйĕ пуян

**Пирĕн шкул епле йĕркеленни ял-йыш астăвăмĕнче упранса юлнă. Шкул 1887 çулта ĕçлеме тытăннă, Гурий Çветтуй ячĕпе хисепленнĕ. Шкул заведующийĕ М.Дмитриев священник, учителĕ Петр Семенович Семенов пулнă.**

Палăртмалла, Петр Семенович – паллă чĕлхеçĕн, чăваш чĕлхин грамматикине тата синтаксисне йĕркелекенĕн Семен Петрович Горскин ашшĕ. Пирвайхи шкул шăпах та Петр Семеновăн килĕнче вырнаçнă. 1909 çулта ăна çĕнетсе улăштарнă, земство училищине уçнă. Иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенче вĕренӳ учрежденийĕ аталанса пынă. Ăна колхоз çамрăкĕсен шкулĕ те тенĕ. Çавăн пекех çичĕ çул, сакăр çул вĕренмелли учреждени те шутланнă. 1980 çултан тытăнса – вăтам шкул. Халĕ ачасем икĕ хутлă кирпĕч çуртра пĕлӳ пухаççĕ. Классем çутă та хăтлă. Вĕренӳ кабинечĕсен пурлăх бази çирĕп. Акă, информатика кабинечĕ хăватлă компьютер техникипе пуянланнă. Спортзал, спортплощадка тĕплĕ юсав ĕçĕсем хыççăн çĕнелсе улшăнчĕ.

Вăрман Кипек шкулĕнче хăйсен тивĕçне чун-чĕререн пурнăçлакан педагогсем вăй хураççĕ. Вĕсем çамрăк ăрăва паха пĕлӳпе тĕрĕс воспитани парас тесе ырми-канми тăрăшаççĕ. Ачасем тĕрлĕ кружоксемпе секцисене кăмăллах çӳреççĕ.

Шкул хăйĕн выпускникĕсемпе тивĕçлипех мăнаçланать. Ара, вĕсем тĕрлĕ ĕçре тăрăшса пысăк çитĕнӳсем тунă. 1997 çулта шкултан вĕренсе тухнă Людмила Вячеславовна Шоркина (Селивестрова) И.Н.Ульянов ячĕллĕ университетра тимлет. Вăл математика методикин кафедрин доценчĕ, педагогика наукисен кандидачĕ. 40 ытла наука ĕçĕсен авторĕ.

Алексей Валериевич Григорьев Чăваш Республикин ĕçлев министрĕн заместителĕнче тăрăшать. Унăн аппăшĕ, Светлана Валериевна Чикмякова (Григорьева), районти «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçатăн тĕп редакторĕнче вăй хурать. Вениамин Иванович Иванов ĕмĕрĕпе йĕрке хуралĕн тытăмĕнче вăй хунă, отставкăри милици подполковникĕ, тĕрлĕ хаçат-журналсен обществăлла корреспонденчĕ. Виктор Нестерович Нестеров ачасене физикăна вĕрентнĕ, хисеплĕ таврапĕлӳçĕ. Арнольд Николаевич Карзаков пурнăçне сывлăх сыхлавĕпе çыхăнтарнă. Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ. Шкул ытти ятлă-сумлă выпускниксемпе те мăнаçланать.

**Светлана АНДРЕЕВА, 8-мĕш класс.**



# Кĕрхи бал

Акă, ылтăн кĕркунне те çитрĕ. Йывăçсем хитре тум тăхăнчĕç. Сукмакпа утнă чух çулçăсем чăштăртатни илтĕнет. Çак илемлĕ вăхăтра шкулта кĕрхи бал пулчĕ. Эпĕ вăл куна питĕ кĕтрĕм, хӳхĕм тум тăхăнтăм. Хамăр класа та тĕрлĕ тĕслĕ çулçăсемпе капăрлатрăмăр. Сĕтел çине тутлă апат-çимĕç хатĕрлесе лартрăмăр. Эпĕ сырник пĕçертĕм, манăн юлташ Карина вара – печени. Уявра вăйăсем вылярăмăр, ташларăмăр, юрларăмăр. Классем хушшинче ăмăртусем те иртрĕç.

**Инесса МИТРОФАНОВА, 2-мĕш класс.**

Кĕрхи бала эпир, иккĕмĕш класра вĕренекенсем, тĕплĕн хатĕрлентĕмĕр. Маларах кĕркунне çинчен сăвăсем, юрă-ташă тăрăшсах вĕрентĕмĕр. Çутçанталăк парнисенчен илемлĕ поделкăсем ăсталарăмăр. Тĕрлĕрен конкурссене те хутшăнтăмăр. Пирĕн ушкăн «Тумламсем (Капельки)», тепĕр ушкăнĕ «Листопад» ятлăччĕ. Вĕсен те юрри-ташшисем аван пулчĕç. Кĕрхи уявра эпир иккĕмĕш вырăн йышăнтăмăр.

**Арсений ШОРКИН, 2-мĕш класс.**

# Уяв тĕлне – концерт

Юпа уйăхĕн 5-мĕшĕнче юратнă вĕрентекенсене професси уявĕпе ăшшăн саламларăмăр. Иртенпех шкулта хавас кăмăл хуçаланчĕ. Аслă классенчи ачасем çак кун учительсем пулчĕç. Уроксем вĕçленсен эпир вĕрентекенсене пĕчĕк концертпа савăнтартăмăр, кашнинех чечек çыххи парнелерĕмĕр. Концертра пире мĕн вĕрентнине, мĕн пĕлнине, хамăрăн ăсталăха кăтартрăмăр. Пирĕн пултарулăх вĕрентекенсене питĕ килĕшрĕ. Вĕсем чунтан тав турĕç.

**Марина ДАНИЛОВА, 2-мĕш класс.**

# Пĕлӳ тĕнчи

**Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ кăçал та хаваслă пуçланни халĕ те асрах. Уяв педагогсене те, ачасене те çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм парнелерĕ.**

Каникул вăхăтĕнче кашни вĕренекенех пĕлӳ çурчĕшĕн тунсăхлама ĕлкĕрнĕ. Учительсем вĕренӳ çулĕ кăçал та асра юлтăр тесе ырми-канми тăрăшĕç.

Шкул директорĕ Анна Петровна Андреева çĕнĕ пĕлӳпе хăнăхăва ăша хывмалли тата тепĕр тапхăр тытăннине çирĕплетрĕ. Пĕлӳ тĕнчине пирвайхи утăм тăвакан Наташа Афанасьева пĕрремĕш шăнкăрав пачĕ. Ăна тăххăрмĕш класри Василий Павлов пулăшрĕ. Кăткăс пулсан та, пĕлӳ тĕнчи илĕртӳллĕ. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ кăсăклă та паллă пулăмсемпе пуян пултăрччĕ.

**Дарья ГРИГОРЬЕВА, 8-мĕш класс.**

# Рафаэль

**Çуралнă кун ячĕпе атте мана тимĕр шапа парнелерĕ. Ăна Рафаэль ят патăм.**

Вăл пĕчĕк-ха. Ытларах хăйĕн аквариумĕнчех ларать. Хăш чухне унтан кăларатăп та, Рафаэль сĕтел тăрăх ерипен шăвать. Вăл интереслĕ чĕрчун. Хăй умĕнчи кăранташа е ручкăна ывăтать, çакна чи лайăх вăйă тесе шутлать пулас. Ывăнсан Рафаэль сĕтел çинчех, кĕнекесем хушшинчех, çывăрса каять. Ăна вара аквариума куçаратăп. Эпĕ тимĕр шапапа выляма çав тери юрататăп.

**Василиса ВАСИЛЬЕВА, 3-мĕш класс.**

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.